27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ЯНВАРЬ 31 ЮНКУН 19(6770) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Предприятисенчи профсоюзсен организацийӗ-массӑллӑ ӗҫне вӑйлатар

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче пирӗн предприятисенчи рабочисен йышӗ тӑтӑшах ӳссе пырать. Фабрикӑсемпе заводсене, промартельсемпе учрежденисене ҫӗнӗрен ҫӗнӗ рабочисем ӗҫе кӗреҫҫӗ. Паллах, ҫамрӑк рабочисене пӗр коллектива таччӑн пӗтӗҫтермелле, вӗсене техникӑна вӗрентмелле, обществӑллӑ пурнӑҫа активлӑн хутшӑнтармалла. Предприятисенчи профсоюз организацийӗсен тивӗҫӗ ҫав ӗҫсене туса пырасси пулать те ӗнтӗ.

Ҫамрӑк рабочисене пӑхса ӳстерессине вӗсене профессиллӗ союзсене пӗрлештерниччен тытӑнаҫҫӗ. Ҫак ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ предприятисенче профсоюз членӗсен йышӗ тӑтӑшах ӳссе пырать. Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводра мӗнпур рабочисемпе служащисен тата инженерла-техникла работниксен 92 проценчӗ профессиллӗ союзсене пӗрлешнӗ. Ҫак хисепӗн ытларахӑш пайне ҫамрӑк рабочисем йышӑнаҫҫӗ. Кунта профсоюза илнӗ ҫамрӑк рабочисемпе пӗрлех заводӑн мухтавлӑ ҫыннисем—ватӑ производственниксем те пур. Буйволов юлташ начальник пулса тӑракан цехра профсоюза Евзорова Черников юлташсем кӗнӗ. Вӗсем производствӑра кӑҫалхипе 20-мӗш ҫул ӗҫлеҫҫӗ.

Асӑннӑ предприятири завком председателӗ Петрушов юлташ тата цехсенчи комитетсен председателӗсем рабочисене профсоюза явӑҫтарас ыйтусемпе куллен интересленеҫҫӗ, вӗсем хушшинче организациллӗ-массӑллӑ ӗҫе кирлӗ пек туса пыраҫҫӗ.

Ҫапах та кунти профсоюз руководителӗсен уйрӑмах ытти предприятисенчи профсоюз руководителӗсен халиччен тунӑ ӗҫсемпе лӑпланса ларма кирлӗ мар. Кашни профсоюз организацийӗн хӑйсен предприятийӗнчи мӗнпур рабочисене члена илсе ҫитерме тӑрӑшмалла, профсоюз тулашӗнче пӗр рабочипе служащие те хӑвармалла мар.

Рабочисене профсоюз членне явӑҫтарас ӗҫе, тӗпрен илсен, профгруппӑсен туса пымалла, мӗншӗн тесен вӗсем—профсоюзӑн кӗҫӗн звенисем—рабочисен массипе таччӑнрах ҫыхӑннӑ. Профгруппӑсем ҫавӑн пек пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ пулин те, чылай предприятисенчи профком руководителӗсем вӗсем ҫине тивӗҫлипе ҫавӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ, вӗсем мӗнле ӗҫленинчен предприятири организацин пӗтӗм ӗҫ ӑнӑҫлӑхӗ килнине манса каяҫҫӗ. Пирӗн вӑрман промышленность предприятийӗсенчи профсоюз ӗҫӗсем ҫителӗксӗр пулса пыни ҫав сӑлтавсенчен килет те ӗнтӗ. Хӑшпӗр предприятисенчи профгруппӑсен йышӗ кирлӗ хисепрен—20 ҫынран—чылай пысӑк. Сӑмахран, Канашри вагонсем юсакан заводра уйрӑм цехсенчи профгруппӑсенче 30-шар ҫын е ытларах та шутланать. Паллах, ҫавӑн пек пысӑк группӑсен организаторӗ хӑйӗн ӗҫӗсене вӑхӑтра тата кирлӗ пек туса пыраймасть. Рабочисен профсоюз членне илме ыйтса панӑ заявленийӗсене группӑсен пухӑвӗсенче сӳтсе-явас вырӑнне час-часах цехкомсенче пӑхса тухаҫҫӗ.

Организациллӗ-массӑллӑ ӗҫе япӑхтарса яни уйрӑмах предприятисен пулӑшакан участокӗсенче—юсав мастерскойӗсенче, завод транспорчӗнче, ОРС-сенче, пурӑнмалли ҫуртӗр отделенисенче т. ыт. ҫавӑн пек ҫӗрте—палӑрать. Кунти профгруппӑсене, вӗсем тӳрремӗнех завкомсене пӑхӑнса тӑраҫҫӗ пулин те, профорганизацисен руководителӗсем начар ертсе пыраҫҫӗ.

Асӑннӑ ҫитменлӗхсем ытти союзсен организацийӗсенче те пур. Вӗсем ВЦСПС XII пленумӗн решенийӗсене пурнӑҫа кӗртме, профсоюз организацийӗсен ӗҫӗсене лайӑхлатма, уйрӑмах рабочисемпе служащисене члена илме чӑрмантараҫҫӗ. Ҫавӑнпа профгруппӑсене кирлӗ чухлӗ пӗчӗклетесси, вӗсене йӗркеллӗ ӗҫлеме юрӑхлӑ тӑвасси—предприятисенчи профкомсен паян-ыран татса памалли задачи пулса тӑрать.

Профсоюз обкомӗсемпе завкомӗсен председателӗсем группоргсемпе куллен ӗҫлеме тивӗҫлӗ: вӗсене тӑтӑшах пухса канашламалла, инструкцисем памалла, комитетӑн решенийӗсемпе паллаштармалла. Предприятисенче группоргсем валли кӗске срокла семинарсем организацилесен те чармасть.

Профсоюз обкомӗсен, фабрикӑсемпе заводсенчи тата вырӑнсенчи комитечӗсен рабочисемпе работницӑсем, служащисем хушшинче организаципе массӑллӑ тата политикӑллӑ ӑнлантару ӗҫӗсене анлӑн туса пымалла, уйрӑмах производствӑна ҫӗнӗрен хутшӑннӑ ҫамрӑк рабочисене ӗҫе вӗрентсе, пӑхса ӳстерессишӗн тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла. Ҫамрӑк рабочисене профсоюзӑн пӗлтерӗшӗпе, тӗллевӗпе, задачисемпе, профсоюз членӗсен прависемпе, тивӗҫӗсемпе тӗплӗн паллаштармалла; унпа пӗрлех профсоюз рабочисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатас, сывлӑхне упрас енӗпе мӗнле пысӑк пулӑшу пани ҫинчен ӑнлантармалла.

Рабочисем хушшинчи массӑллӑ ӗҫӗн чи витӗмлӗ формисенчен пӗри вӑл—профсоюз членӗсен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗ. Пӗрлешӳллӗ пухусене малтанах тӗплӗн хатӗрленсе организованно ирттермелле, унта ҫамрӑк членсене пурне те ҫӳретмелле. Групорг, цехком е завком отчечӗсенчен, кулленхи ытти ыйтусене сӳтсе-явса татса паниччен ҫамрӑксем профсоюз мӗн тунине, рабочисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатассишӗн, сывлӑхне сыхлассишӗн мӗнле тӑрӑшнине кураҫҫӗ, обществӑллӑ пурнӑҫа хутшӑнма вӗренеҫҫӗ.

Фабрикӑсемпе заводсенчи тата вырӑнти комитетсен хӑйсен ӗҫне пурне те курӑнмалла туса пымалла; профорганизаци хӑйӗн членӗсен нушисене мӗнле тивӗҫтерсе пынин примерӗсемпе кашни рабочипе служащие паллаштармалла; комитетсен финанс отчечӗсене малтан тӗплӗн те ӑнланмалла хатӗрлесе предприятисенчи хаҫатсенче пичетлесен вырӑнлӑ пулмалла.

Кашни предприятирех профсоюз активӗ пур. Завкомсемпе цехкомсен ҫав активе ҫине таянса ӗҫлемелле. Профсоюз активисчӗн рабочисемпе цехра е пухура ҫеҫ мар, клубра та, общежитире те тата ытти ҫӗрте те тӗл пулса калаҫмалла, вӗсен пурнӑҫпа йӑлари нушисене вӑхӑтра тивӗҫтермелле.

Профсоюзсем промышленноҫа ҫӗршывӑн фронтшӑн ӑнӑҫлӑ ӗҫлеттерес тӗлӗшпе питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсен рабочисемпе служащисен ҫӗнӗ йышне пӑхса ӳстерес енӗпе те нумай ӗҫсем тумалла. Ҫакӑ вара предприятисенчи профсоюзсен организациллӗ-массӑллӑ ӗҫне татах та ытларах вӑйлатма хушать.

Хӗрлӗ Ҫарӑн фронтри аслӑ ҫӗнтерӗвӗсем, пӗтӗм совет халӑхне хавхалантарнӑ пекех, рабочисене фронтшӑн ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантараҫҫӗ. Профсоюз организацийӗсен ҫав патриотла ҫӗкленӗве малалла ӳстерсе пырассишӗн, рабочисен ҫарне фронта татах та вӑйлӑнрах пулӑшма мобилизацилессишӗн тӑрӑшмалла.

Сталинла премисем паракан комитетра

Наукӑпа изобретательство ӗҫӗсемшӗн тата литературӑпа искусство ӗҫӗсемшӗн Сталинла премисем паракан комитетсем хальхи вӑхӑтра 1943-мӗшпе 1944-мӗш ҫулсемшӗн Сталинла премисене кама-кама памаллине палӑртаҫҫӗ.

1943-мӗшпе 1944-мӗш ҫулсемшӗн Сталинла премисене наука ыйтӑвӗсемпе ҫырнӑ питӗ чаплӑ кӗнекесемшӗн, изобретенисемшӗн, производство ӗҫӗн меслечӗсене тӗпрен ӳрӑхлатса лайӑхлатнӑшӑн тата литературӑпа искусствӑн чи паха произведенийӗсемшӗн параҫҫӗ.

1943-мӗшпе 1944-мӗш ҫулсемшӗн Сталинла премисене пӗрле панӑ пирки премисен хисепӗ икӗ хут ӳсет.

Сталинла премисем пама сӗнсе ҫырнӑ хутсене наукӑллӑ ӗҫсемпе пӗрле, е изобретенисем ҫинчен, производство ӗҫӗн меслечӗсене лайӑхлатни ҫинчен ҫырса кӑтартнипе пӗрле, е литературӑпа искусство произведенийӗсемпе пӗрле мартӑн 1-мӗшӗччен ҫак адреспа ямалла: наукӑпа изобретательство тӗлӗшпе—Мускав, Рождественка, 11; литературӑпа искусство тӗлӗшпе — Мускав, Художествӑллӑ театр проезчӗ, Сталинла премисем паракан комитета.

Апат-ҫимӗҫ промышленность работникӗсен республикӑри канашлӑвӗ

Ҫак кунсенче, Шупашкарта, Чӑваш республикинчи апат-ҫимӗҫ промышленность работникӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн 1941 ҫулхи ӗҫӗсемпе 1945 ҫулхи задачисем ҫинчен сӳтсе-яврӗ. Ҫак ыйтупа Чӑваш АССР Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссарӗ Калинкина юлташ доклад туса пачӗ.

Иртнӗ ҫулта пирӗн апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ начар мар ӗҫлерӗ. Ҫулталӑкри плана, пӗтӗмӗшпе илсен, 102 процент, вӑл шутра районри предприятисем 140 процент тултарнӑ. Хуласемпе районсенчи предприятисенчен Канашри, Ҫӗмӗрлери, Улатӑрти, Шупашкарти, Кувакинӑри тата Вӑрмарти апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем уйрӑмах лайӑх ӗҫленине палӑртмалла. Вӗсем апат-ҫимӗҫ продукчӗсене плана пӑхниччен нумайрах туса кӑларнӑ.

Канашлу пирӗн апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем пуррине те палӑртрӗ. Районсенчи чылай комбинатсем хуҫалӑх енӗпе начар, кивӗ майсемпе ӗҫлеҫҫӗ, техникӑна ҫӗнетсе пымаҫҫӗ, вырӑнти чӗртавӑрсемпе ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ. Апат-ҫимӗҫ предприятийӗсене ҫӗнӗрен тӑвасси сӳрӗк пырать. Муркаш районӗнче кутаринччен те апат-ҫимӗҫ комбиначӗ ҫук.

Иртнӗ ҫулта хӑшпӗр апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем ытла та начар ӗҫленӗ. Ишлей, Октябрьски, Йӗпреҫ, Чкаловски районсенчи комбинатсем ҫулталӑкри плана чылай тултарман. Октябрьски районри комбинат ҫулталӑк хушшинче 8 пин тенкӗлӗх ҫеҫ продукци туса кӑларнӑ.

Доклад тӑрӑх пренире 32 ҫын тухса каларӗҫ. Ҫӗмӗрлепе Кувакино районӗсенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен директорӗсем Сиротӑпа Жоров юлташсем канашлура пулнисене хӑйсен ӗҫ опычӗпе паллаштарчӗҫ.

Канашлу ӗҫӗсене ВКП(б) Обком секретарӗн вырӑнти промышленность енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Репкин, Чӑваш АССР Совнарком председателӗн заместителӗ Терентьев юлташсем хутшӑнчӗҫ. Вӗсем, пирӗн апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн ӗҫӗсене тишкерсе тата малашнехи задачӑсене палӑртса, сӑмахсем тухса каларӗҫ.

Канашлу апат-ҫимӗҫ промышленность предприятийӗсен 1945 ҫулхи ӗҫӗсене тӗплӗн палӑртса решени йышӑнчӗ.

Апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работникӗсене Чӑваш АССР Совнаркомӗ премилени

РСФСР Совнаркомӗпе ВЦСПС, апат-ҫимӗҫ промышленность предприятийӗсен 1944 ҫулхи декабрь уйӑхӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухса, Чӑваш АССР Совнаркомне виҫҫӗмӗш премине панӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫав премие укҫине пирӗн республикӑри апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работникӗсене пурӗ 19 ҫынна премиленӗ. Уйӑхри ӑмӑртура укҫипе премиленисен шутӗнче Чӑваш АССР Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссарӗ П. И. Калинкина, Наркоматӑн главнӑй инженерӗ С. Е. Ефимов, Чӑваш АССР Совнаркомӗн промышленность ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен консультанчӗ К. С. Ильин юлташсем пур. Красноармейски, Сӗнтӗрвӑрри, Шӑхасан, Калинино тата Кувакино районӗсенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен директорӗсене С. А. Алексеев, П. Л. Трошин, А. Г. Лившин, С. В. Яндушкин тата Т. Ф. Жоров юлташсене кашнине 600-шер тенкӗпе премиленӗ. Ҫавӑн пекех Шупашкарпа Канаш хулисенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен директорӗсене И. С. Марошинпа П. К. Захватова юлташсене 600 шер тенкӗ преми панӑ.

Совет Союзӗн Геройӗ И. Н. Герасимов

Иван Николаевич Герасимов 1921 ҫулта Шупашкар районӗнчи Аникеево ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Вӑл ача чухнех машинӑсене юратнӑ, ӳссе ҫитсен вӗсемпе ҫӳреме ӗмӗтленнӗ.

Ӗмӗтленнӗ ӗмӗт ҫухалман. 1937 ҫулта вӑл Шупашкарти аэроклуба вӗренме кӗнӗ. Унта 3 ҫул хушши вӗреннӗ хыҫҫӑн летчиксен шкулне вӗренсе пӗтернӗ. Ун хыҫҫӑн татах летчиксен курсӗнче вӗреннӗ. 1942 ҫулта курсран вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн Герасимов юлташ, боевой машина илсе, фронта тухса кайнӑ.

Ҫамрӑк летчик Великие Луки, Белгород, Харьков, Киев, Белая Церьковь, Житомир, Бердичев, Львов хулисемшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑ. Днепр, Дунай, Висла шывӗсем урлӑ каҫнӑ. Польшӑпа Румыние, Венгрие ирӗке кӑларасишӗн ҫапӑҫнӑ. Корсунь-Шевченковски районӗнче сывлӑшри ҫапӑҫусенче пирӗн земляк, летчик-штурмовик Иван Николаевич Герасимов тӑшманӑн «Юнкерс—52» йышши икӗ транспортнӑй самолетне персе ӳкернӗ. Ҫавӑншӑн ӑна фронт командующийӗ тав тунӑ.

Сывлӑшри самолета ӑстан ертсе пырса, ӑнӑҫлӑн штурмласси ҫӑмӑл ӗҫ мар. Апла пулин те, летчик Герасимов талӑкра 5-шер вӗҫев тунӑ. Вӑрҫӑ хирне кӗнӗренпе вӑл пурӗ 400 вӗҫев тунӑ. Вӗсенчен 320-шӗ боевой вӗҫевсем.

Ҫамрӑк летчик малтан сержант пулнӑ, халь—капитан, самолетсен эскадрильине ертсе пырать, пӗр сухатусӑр ҫапӑҫать. Задачисене ӑнӑҫлӑн та хӑюллӑн пурнӑҫласа пынӑшӑн ӑна правительство Ленин орденӗпе, Александр Невский орденӗпе, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе тата виҫӗ хутчен Хӗрлӗ Ялав орденӗсемпе наградӑланӑ. 1944 ҫулхи октябрь уйӑхӗнче ӑна Совет Союз Геройӗн ятне панӑ.

Совет Союзӗн Геройӗ, пирӗн земляк Герасимов юлташ ҫак кунсенче хӑй ҫуралнӑ тӑван ялне таврӑнчӗ. Вӑл, январӗн 27-мӗшӗнче район центрӗнче пулса, ял Совет тата колхоз председателӗсемпе, учительсемпе, служащисемпе тӗл пулса каларӗ.

Иван Николаевичӑн пиччӗшӗ Михаил Николаевич та фронтра ҫапӑҫать. Вӑл—артиллерист-старшина. Тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫнӑшӑн Совет Правительстви ӑна та Совет Союз Геройӗн ятне панӑ. Ҫапла вара, Аникеевӑри «Заря» колхоз членӗ Николай Герасимович икӗ Герой пӑхса ӳстернӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Нумай ачаллӑ амӑшӗсене „Ача амӑшӗн мухтавӗ“ ятлӑ орденсемпе тата „Ача амӑшӗсен медалӗ“ ятлӑ медальсемпе наградӑласси ҫинчен

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ 1944 ҫулхи августӑн 18-мӗшӗнче йышӑннӑ Указ тӑрӑх, СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн ячӗпе ҫаксене наградӑлас:

Тӑхӑр ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене

«АЧА АМАШЕН МУХТАВӖ» ЯТЛА I-МӖШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Мария Васильевна **Васильевӑна**—Вӑрмар районӗнчи Арапуҫ ял Советӗнчи «Арабось» колхоз колхозницине.
2. Татьяна Дмитриевна **Забавинӑна**—Канаш хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
3. Анастасия Игнатьевна **Кудрявцевӑна**—Вӑрнар районӗнчи Упнер ял Советӗнчи «Апнеры» колхоз колхозницине.
4. Елизавета Васильевна **Романовӑна**—Шупашкар сывӑхӗнчи «Красный партизан» колхоз колхозницине.
5. Татьяна Гавриловна **Сергеевӑна**—Шӑмӑршӑ районӗнчи Палтиел ял Советӗнчи «Красная Звезда» колхоз колхозницине.
6. Антонина Николаевна **Симоновӑна**—Улатӑр хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
7. Марфа Романовна **Яковлевӑна**—Вӑрмар районӗнчи Мӑн Ҫырма ял Советӗнчи «Новая жизнь» колхоз колхозницине.

Сакӑр ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене

«АЧА АМАШЕН МУХТАВӖ» ЯТЛА II-МӖШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Анна Ерофеевна **Алексеевӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуркасси ял Советӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
2. Евдокия Степановна **Андреевӑна**—Сӗнтӗр районӗнчи Мӑн Сӗнтӗр ял Советӗнчи Фрунзе ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
3. Агафия Васильевна **Васильевӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Тури Упакасси ял Советӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
4. Пелагея Васильевна **Васильевӑна**—Советски районри Ваҫкасси ял Советӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
5. Анна Владимировна **Владимировӑна**—Вӑрмар районӗнчи Кив Вӑрмар ял Советӗнчи «Большевик» колхоз колхозницине.
6. Федора Тимофеевна **Григорьевӑна**—Первомайски районри Нӑрваш Шӑхаль ял Советӗнчи «Восход» колхоз колхозницине.
7. Анна Дмитриевна **Давыдовӑна**—Первомайски районри Турхан ял Советӗнчи «11 лет Чувашии» колхоз колхозницине.
8. Наталия Семеновна **Ивановӑна**—Шупашкар хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
9. Надежда Григорьевна **Козловӑна**—Етӗрне хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
10. Екатерина Николаевна **Ломоносовӑна**—Тӑвай районӗнчи Тӑвай ял Советӗнчи Шмидт ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
11. Гельмибеян Ямалтдиновна **Мударисовӑна**—Шӑмӑршӑ районӗнчи Палтиел ял Советӗнчи «Красная Звезда» колхоз колхозницине.
12. Агафия Васильевна **Мукинӑна**—Шӑхасан районӗнчи Ҫӗн Чулкасси ял Советӗнчи «Ильич» колхоз колхозницине.
13. Анна Фроловна **Нестеревӑна**—Шӑмӑршӑ районӗнчи Шӑмӑршӑ ял Советӗнчи «Мотор» колхоз колхозницине.
14. Ольга Павловна **Овчинниковӑна**—Сӗнтӗр районӗнчи Хачӑк ял Советӗнчи Ватутин ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
15. Татьяна Порфирьевна **Порфирьевӑна**—Вӑрмар районӗнчи Арапуҫ ял Советӗнчи «Арабось» колхоз колхозницине.
16. Анисия Васильевна **Прохоровӑна**—Калинински районри Калинино ял Советӗнчи «Правда» колхоз колхозницине.

Ҫичӗ ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене

«АЧА АМАШЕН МУХТАВӖ» ЯТЛА III-МӖШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Татьяна Александровна **Абрамовӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Сӗнтӗрпуҫ ял Советӗнчи «Ядро» колхоз колхозницине.
2. Ирина Павловна **Александровӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Сӗнтӗрпуҫ ял Советӗнчи «Первое мая» колхоз колхозницине.
3. Анна Андреевна **Андреевӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Паникасси ял Советӗнчи «Шордан» колхоз колхозницине.
4. Елена Федоровна **Андреевӑна**—Вӑрнар районӗнчи Упнер ял Советӗнчи «Пионер» колхоз колхозницине.
5. Евдокия Христофоровна **Богатовӑна**—Шӑмӑршӑ районӗнчи Пуянкасси ял Советӗнчи «Канаш» колхоз колхозницине.
6. Евлампия Сергеевна **Белоруссовӑна**—Йӗпреҫ поселокӗнчи килхуҫи хӗрарӑмне.
7. Евгения Дмитриевна **Быстрицкаяна**—Вӑрнар районӗнчи Хапӑс ял Советӗнчи «Советская деревня» колхоз колхозницине.
8. Матрена Захаровна **Емельяновӑна**—Первомайски районри Первомайски ял Советӗнчи «Красный луч» колхоз колхозницине.
9. Анна Петровна **Ендеевӑна**—Первомайски районри Первомайски ял Советӗнчи «Красный луч» колхоз колхозницине.
10. Евдокия Максимовна **Ермошкинӑна**—Шӑмӑршӑ районӗнчи Анат Чаткас ял Советӗнчи «Красный воин» колхоз колхозницине.
11. Перасковья Ивановна **Ивановӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Юртакасси ял Советӗнчи «Искра» колхоз колхозницине.
12. Екатерина Алексеевна **Качаковӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Юртакасси ял Советӗнчи «Моряк» колхоз колхозницине.
13. Евдокия Григорьевна **Клячкинӑна**—Ҫӗмӗрле хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
14. Анна Демьяновна **Ковалевӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Сӗнтӗрпуҫ ял Советӗнчи «Первое мая» колхоз колхозницине.
15. Варвара Федоровна **Коньковӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Уплер ял Советӗнчи «Наука Ленина» колхоз колхозницине.
16. Перасковья Ивановна **Кукловӑна**—Канаш хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
17. Серафима Дмитриевна **Лямасовӑна**—Сӗнтӗрвӑрри хулинчи «Красный кузнец» артель работницине.
18. Матрена Яковлевна **Матросовӑна**—Вӑрмар районӗнчи Эҫпепе ял Советӗнчи «13 лет Октября» колхоз колхозницине.
19. Дария Андреевна **Никифоровӑна**—Сӗнтӗр районӗнчи Хачӑк ял Советӗнчи «Красное знамя» колхоз колхозницине.
20. Анна Евгеньевна **Никоновӑна**—Етӗрне хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
21. Екатерина Михайловна **Перцевӑна**—Вӑрнар поселокӗнчи килхуҫи хӗрарӑмне.
22. Фекла Яковлевна **Рамеевӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Уплер ял Советӗнчи «Наука Ленина» колхоз колхозницине.
23. Надежда Федоровна **Рожковӑна**—Йӗпреҫ поселокӗнчи килхуҫи хӗрарӑмне.
24. Федора Филипповна **Самойловӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуркасси ял Советӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
25. Марфа Афанасьевна **Семеновӑна**—Вӑрнар районӗнчи Упнер ял Советӗнчи «Апнеры» колхоз колхозницине.
26. Матрена Михайловна **Семеновӑна**—Етӗрне хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
27. Анна Сергеевна **Сергеевӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Сӗнтӗрпуҫ ял Советӗнчи «Сӗнтӗрпуҫ» колхоз колхозницине.
28. Ирина Сергеевна **Сергеевӑна**—Вӑрмар районӗнчи Мӑн Ҫырма ял Советӗнчи «Новая жизнь» колхоз колхозницине.
29. Татьяна Егоровна **Смирновӑна**—Сӗнтӗр районӗнчи Хачӑк ял Советӗнчи «Большевик» колхоз колхозницине.
30. Ефросиния Игнатьевна **Степановӑна**—Первомайски районри Первомайски ял Советӗнчи «Красный луч» колхоз колхозницине.
31. Евдокия Тимофеевна **Тимофеевӑна**—Вӑрмар районӗнчи Арапуҫ ял Советӗнчи «Арабось» колхоз колхозницине.
32. Матрена Васильевна **Трофимовӑна**—Сӗнтӗр районӗнчи Мӑн Сӗнтӗр ял Советӗнчи «Новый путь» колхоз колхозницине.
33. Александра Денисовна **Фомкинӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуркасси ял Советӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
34. Евдокия Ильинична **Черновӑна**—Елчӗк районӗнчи Ҫӗн Курнаваш ял Советӗнчи «Путь Ленина» колхоз колхозницине.
35. Акулина Григорьевна **Шашкинӑна**—Йӗпреҫ районӗнчи Йӗпреҫ ял Советӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.

(Малалли пулать).

„Хӗрлӗ Ҫарӑн чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсем пире ӗҫре хавхалантараҫҫӗ“

20 кун хушшинче плана 120 процент тултарнӑ

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Районри колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче савӑнӑҫлӑ пухусем, митингсем пулса иртеҫҫӗ. Ҫак кунсенче райпромкомбинатра пысӑк митинг пулса иртрӗ. Митингра рабочисемпе работницӑсем, пӗр кӑмӑллӑ пулса, чаплӑ ҫӗнтерӳсем туса пыракан Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе офицерӗсем валли ытларах кӗпе-йӗм тата ытти япаласем туса пама обязательство илнӗ. Райпромкомбинатӑн ҫӗвӗ ҫӗлекен цехӗнче ӗҫлекенсем хӑйсен сӑмахне чыслӑн пурнӑҫлаҫҫӗ. Вӗсем январь программине 20 кун хушшинче 120 процент тултарнӑ. Ҫак цехра ӗҫлекен Екатерина Петрова ҫапла каларӗ:

— Тӑван Хӗрлӗ Ҫарӑн историллӗ чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсем пире ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантараҫҫӗ. Эпир кӑнтӑрла та, ҫӗрле те Хӗрлӗ Ҫара ытларах пулӑшас кӑмӑлпа ҫунса ӗҫлетпӗр, тӑван воинсене сӑмахпа мар, ӗҫпе пулӑшма пулатпӑр,—терӗ.

Е. Петрова, В. Мартынова, Комарова, А. Михайлова юлташсем январь уйӑхӗнчи хӑйсен заданине 20 кун хушшинче кашниех 120—130-шар процент тултарнӑ.

МТС-ра та трактористсемпе трактористкӑсен тата ытти рабочисемпе служащисен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура МТС парторганизацин секретарӗ Петряков юлташ Хӗрлӗ Ҫар мӗнпур фронтсенче чаплӑ ҫӗнтерӳсем туса пыни ҫинчен доклад туса пачӗ.

Митингра МТС-ӑн главнӑй механикӗ Митрофанов юлташ хумхануллӑ сӑмах тухса каларӗ:

— Эпир лӑпкӑ вырӑнта пурӑнатпӑр, лайӑх мастерскойра ӗҫлетпӗр. Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр боецӗсем фронтри йывӑр та хӑрушӑ условисенче тӗлӗнмелле чаплӑ ҫӗнтерӳсем тӑваҫҫӗ. Пур фронтсенче те совет хӗҫпӑшалӗ совет халӑхӗн вӑй-халне кӑтартса парать. Халӗ пирӗн ӗлӗкхи пек ӗҫлемелле мар, кашни пусӑмрах фронт умӗнчи ответлӑха туйса тӑмалла, фронта пур майсемпе те пулӑшмалла. Кӑҫал Хӗрлӗ Ҫара организациленӗренпе 27 ҫул ҫитет. Ҫав пӗтӗм халӑх уявӗ тӗлне эпир МТС-ри мӗнпур тракторсене юсаса ҫитерме пултаратпӑр тата юсаса пӗтермелле те.

Пухура пулнисем пысӑк ҫӗкленӳпе тата пӗр кӑмӑллӑ пулса, Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарнӑ тӗле МТС-ри мӗнпур тракторсемпе вӗсенчен кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене юсаса пӗтерме, районри колхозсене ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫре пулӑшма татӑклӑ обязательство илчӗҫ.

Районри колхозсенче те пухусем пысӑк савӑнӑҫпа иртеҫҫӗ. «Красная Чувашия» колхозра (председателӗ Андреев юлташ) пухӑ хыҫҫӑн ҫуракине ҫине тӑрса хатӗрленме тытӑнчӗҫ. Кунта кашни бригадӑнах уйрӑм агроплан туса панӑ. Вӑл плана мӗнле пурнӑҫласа пынине вӑхӑтран вӑхӑта тӗрӗслесех тӑраҫҫӗ. Вӑрлӑх ҫителӗклӗ хатӗрленӗ тата ӑна лайӑх тасатса, акмалли кондицие лартнӑ.

«Красная Чувашия» колхоз пысӑк мар. Апла пулсан та кунта уйӑхлӑхра 620 лав тислӗк хире кӑларнӑ, 24 центнер кӗл, 19 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ, 43 гектар ҫинче юр тытнӑ. Плугсене, сӳресене юсаса хунӑ. Халӗ ут таврашӗсемпе урапасене юсаҫҫӗ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

160 МИЛЛИОН КИЛОВАТТ-СЕХЕТ ЭЛЕКТРОЭНЕРГИ ПЕРЕКЕТЛЕНЕ

Хӗрлӗ Ҫар тунӑ ҫитӗнӳсемпе хавхаланса, ҫӗршыври энергетиксем промышленность предприятийӗсенче электроэнерги перекетлес тӗлӗшпе социализмлӑ ӑмӑрту пуҫласа янӑччӗ. 1944 ҫулхи тӑваттӑмӗш кварталта ӑмӑртӑва 2.378 фабрикӑпа заводӑн коллективӗсем хутшӑнчӗҫ. Рационализацилле хаклӑ сӗнӳсем нумай панӑ. Вӑл сӗнӳсене производствӑра пурнӑҫлани квартал хушшинче 160 миллион киловатт-сехет энерги перекетлеме май панӑ.

Мускав хулипе Мускав облаҫӗнчи промышленность предприятийӗсем пысӑк ҫитӗнӳ тунӑ. Вӗсенче 48 миллион киловатт-сехет энерги перекетлесе хӑварнӑ. Свердловск облаҫӗнче—16 миллион киловатт-сехет, Горький облаҫӗнче—11 миллион киловатт сехет перекетленӗ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ЯНВАРӖН 29-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Январӗн 29-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ХӖВЕЛТУХАҪ ПРУССИРЕ халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла ҫапӑҫса туртса илнӗ, вӑл шутра — ЛЯПТАУ, МОЛЛЕЙНЕН, ЗИДЛУНГ (КЕНИГСБЕРГ хулинчен 3 километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре), ЛЮДВИГСВАЛЬДЕ, АЛЬТЕНБЕРГ (КЕНИГСБЕРГ хулинчен 4 километр кӑнтӑртарахра), МАНСФЕЛЬД, ТАРАУ, ШРОМБЕНЕН, ШТОЛЬЦЕНФЕЛЬД, ГРОСС ЛЯНГВАЛЬДЕ, ЛАНГХАЙМ, ШТУРМХЮБЕЛЬ, РЕССЕЛЬ, ГИЗЕВЕН ятлӑ пысӑк ялсем тата ЛЯПТАУ, ГРОСС РАУМ, НЕССЕЛЬБЕК, ШРОМБЕНЕН, РЕССЕЛЬ чугун ҫул станцийӗсем. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах пирӗн ҫарсем АЛЛЕНШТАЙН хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшманӑн хӗвеланӑҫ еннелле татса тухма хӑтланакан пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсем тунӑ атакӑсене сире-сире янӑ.

Январӗн 28-мӗшӗнче БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем Хӗвелтухӑҫ Пруссире нимӗҫсенчен 130 самолет, 136 тупӑ, 270 автомашина тытса илнӗ тата 1.300 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

ТОРН районӗнче пирӗн ҫарсем ТОРН хулинче хупӑрласа илнӗ тӑшман чаҫӗсене пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ.

БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ) хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, ФАНДСБУРГ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—БРИЗЕН, ПРУСТ, КОМИРОВО ятлӑ пысӑк ялсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, ӑнӑҫлӑ наступлени вӑйлатса пырса, ПОЗНАНЬ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Германи чикки урлӑ каҫнӑ та, нимӗҫ Померанийӗ ҫӗрӗ ҫине кӗрсе кайса, январӗн 29-мӗшӗнче ШЕНЛАНКЕ, ЛУКАТЦ КРЕЙЦ, ВОЛЬДЕНБЕРГ тата ДРИЗЕН хулисене—сулйӗрсен паха узелӗсемпе нимӗҫсен оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—ҫапӑҫса туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата нимӗҫ Померанийӗ ҫӗрӗнче халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла йышӑннӑ. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем Польша ҫӗрӗнче ЦИРКЕ, БИРНБАУМ, НОЙШТАДТ, НОЙТОМИШЕЛЬ, БЕНЧЕН, ВОЛЬШТЫН хулисене тата халӑх пурӑнакан ытти 400 пункта ытла йышӑннӑ.

ПОЗНАНЬ районӗнче пирӗн ҫарсем ПОЗНАНЬ хулинче хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ.

КАТОВИЦЕ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 70 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ШЕНВАЛЬД, КНУРУВ, БУЯКОВ, ВЫРЫ, КОБЬИР, ВОЛАУ, КАНЕВ, БЕСТВИНА, КОЗЫ, ЛИПНИК, ПОРОМБКА ятлӑ пысӑк ялсем.

УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем, Карпат тӑрӑхӗнчи сӑртлӑ-вӑрманлӑ вырӑнсенчи йывӑр условисенче малалла наступлени туса пырса, январӗн 29-мӗшӗнче НОВЫ ТАРГ хулине—сулйӗрсен паха узелӗпе тӑшман оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне — туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — ОСЕЛЕЦ, ЕРДАНУВ, СИДЗИНА, СПЫТКОВИЦЕ, ЧАРНЫ ДУНАЕЦ, ЖДЯР, ШУНЯВА ятлӑ пысӑк ялсем.

БУДАПЕШТРА пирӗн ҫарсем ҫаплах хулан хӗвеланӑҫ пайӗнче (БУДАРА) хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ, 32 квартал туртса илнӗ.

Январӗн 28-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 203 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 116 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Хӗвелтухӑҫ Пруссире пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ. Пӗр соединенин чаҫӗсем, тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе пырса, Кенигсберг хулинчен 3 километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре ларакан Зидлунг ялне туртса илнӗ. Пирӗн ытти чаҫсем тӑшманӑн вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ пункчӗсене нумайӗшне аркатса тӑкнӑ. Кенигсберг хулине кӑнтӑр енчен ҫавӑрса илсе пыраҫҫӗ. Ку районра нимӗҫсен тупӑсем персе тӑмалли питӗ вӑйлӑ 56 дотне ҫӗр айӗн ҫӳремелли ҫулӗсемпе тата склачӗсемпе пӗрлех тытса илнӗ. Тепӗр участокра совет танкӗсемпе пехоти ҫапӑҫса Алле шывӗ урлӑ каҫса кайнӑ та ҫав шывӑн хӗвеланӑҫ хӗрринче халӑх пурӑнакан чылай пункта туртса илнӗ. Хӗрлӗ Ҫар пыра-пыра ҫапнипе каялла чакакан нимӗҫсем ҫулсем ҫинче хӑйсен техникине, хӗҫпӑшалне тата ҫар хатӗрӗсене нумай пӑрахса хӑвараҫҫӗ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата аэродромсенче кун каҫиччен нимӗҫсен 108 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

Алленштайн хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре ҫаплах хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Нимӗҫсем унти ҫапӑҫӑва эсэсовецсен «Герман Геринг» ятлӑ танковӑй корпусне, темиҫе пехотнӑй дивизипе танковӑй дивизине тата тинӗс пехотин чаҫӗсене кӗртсе янӑ та, хӑйсен ҫар сыннисем темӗн чухлех пӗтеҫҫӗ пулин те, хупӑрласа илнӗ ункӑна татса, хӗвеланӑҫнелле тухса тарма тӑрӑшаҫҫӗ. Совет пехотинецӗсем, артиллеристӗсем тата танкисчӗсем, хӑватлӑн персе тӑрса тата нимӗҫсене хӑйсене хирӗҫ пыра-пыра ҫапса, тӑшман хӗснине чарса тӑраҫҫӗ, тӑшман салтакӗсемпе техникине пӗтереҫҫӗ. Пирӗн позицисем патне пымалли вырӑнсенче тӑшманӑн 3.000 вилли ытла выртса юлнӑ тата персе ҫӗмӗрнӗ 35 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ тӑрса юлнӑ.

* * *

Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ. Познань хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшман пирӗн ҫарсене Польшӑпа Германи чикки патӗнчи Нетце шывӗ ҫинче чарма тӑрӑшнӑ. Нумай вӑхӑтлӑха тунӑ оборона тӑрӑхӗсене усӑ курса, нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑнӑ, час-часах контратакӑсем тунӑ. Совет танкӗсемпе пехоти, артиллери пулӑшнипе, пӗр вӑхӑтрах нумай тӗлте Нетце шывӗ урлӑ каҫнӑ та, тӑшман оборонине татнӑ. Ҫитӗнӗве малалла вӑйлатса пырса, пирӗн ҫарсем нимӗҫ Померанийӗ ҫӗрне кӗрсе кайнӑ, Шенланке, Лукатц Крейц тата Дризен хулисене туртса илнӗ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах пирӗн Познань хулинчен хӗвеланӑҫнерехре кӗрешекен ҫарсем, тӑшмана каялла хӑваласа ярса тата ҫӗмӗре-ҫӗмӗре пырса, Польшӑпа Германи чикки патӗнче ларакан Польшӑн Бирнбаум хулине туртса илнӗ. Тӑшмана аякран кайса ҫавӑрса илмелли маневрсемпе анлӑн усӑ курса, совет ҫарӗсем тӑшманӑн фронта пыракан резервӗсене аркатаҫҫӗ. Кун каҫиччен ҫапӑҫусенче 4.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ҫарсем трофейсем тытса илнӗ, вӑл шутра—12 танк, 70 тупӑ, 300 автомашина, 60 паровоз тата 50 чугун ҫул эшелонӗ. 1.100 нимӗҫе тыткӑна илнӗ.

* * *

Катовице хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Микалув хулинчен кӑнтӑртарахри аслӑ вӑрманта хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем нимӗҫ ҫарӗсен ушкӑнне виҫӗ енчен пырса атакӑланӑ та аркатса тӑкнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман виллисем нумай вырта юлнӑ. Нимӗҫсен 41 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 200 тупӑ ҫити тата ытти трофейсем те нумай тытса илнӗ. Пӗр пин нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Пӗр районра ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫсен 291-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗн Фингер генерал-майорӑн ӳтне тупнӑ.

* * *

Украинӑри 4-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Советсен гварди чаҫӗсем Карпат тӑрӑхӗнчи Куклюнь, Турбач, Буковина тата Горц тӑвӗсенчен иртсе кайнӑ та Новы Тарг хули патне пымалли вырӑнсем ҫине ик енчен пырса тухнӑ. Чарны Дунаец шывӗ хӗррипе пыракан оборонӑпа усӑ курса, нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Пирӗн подразделенисем ҫав шыв урлӑ каҫнӑ та, ҫав тери хӑвӑрт атакӑласа, сулйӗрсен паха узелӗ пулса тӑракан Новы Тарг хулине туртса илнӗ. Кун каҫиччен пирӗн ҫарсем нимӗҫсенчен 120 тупӑ, 158 пулемет, 500 автомобиль, 30 паровоз тата тӗрлӗрен ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 1.000 вагон ытла тытса илнӗ. 920 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ Балтика тинӗсӗн кӑнтӑр пайӗнче нимӗҫсен пӗтӗмӗшпе 16 пин тонна таякан виҫӗ транспортне тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен пӗр понтонне шыва путарнӑ. Унсӑр пуҫне тата тӑшманӑн пӗр пысӑк транспортне флот карапӗсем путарнӑ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем нимӗҫсен «Кӑнтӑр» ятлӑ армейски ушкӑнӗн командующийӗ Гарпе генерал-полковник январь уйӑхӗн пуҫламӗшӗнче кӑларнӑ приказа тытса илнӗ. Приказра ҫапла каланӑ: «Мана пӑхӑнса тӑракан армисен салтакӗсем! Пирӗн умра пысӑк йывӑрлӑхсем тӑраҫҫӗ. Тӑшман эпир йышӑнса тӑракан фронтра наступлени пуҫласа яма хатӗрленет, анчах та эпир ӑна тивӗҫлипе кӗтсе илӗпӗр. Кашни салтак, кирек ӑҫта ҫапӑҫма тивсен те, ниҫта та пӗр шит ҫӗре те тӑшмана ан парӑр. Тӑшман пирӗн оборонӑна татма хӑтланнине пӗтерсе тӑкмашкӑн пирӗн резервра тӑракан пысӑк соединенисем пур, танксемпе штурмлакан тупӑсем те нумай, боеприпассем те темӗн чухлех. Ҫитес ҫапӑҫусем пире татӑклӑ ҫӗнтерӳ туса памалла».

Нимӗҫсен Гарпе генерал-полковникӗ ҫак приказа кӑларнӑранпа нумаях та вӑхӑт иртмерӗ. Анчах та ҫав кӗске вӑхӑт хушшинче фронтра пысӑк ӗҫсем пулса иртрӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар, нимӗҫ ҫарӗсене ҫӗмӗрсе тӑкса, темиҫе ҫӗр километр малалла хӑваласа кайрӗ, нимӗҫ ҫарӗсене умлӑн-хыҫлӑн вӑйлӑрах та вӑйлӑрах пыра-пыра ҫапать.

ВЫРӐССЕН ҪАР КӖНЕКИСЕН ВЫСТАВКИ

Мускавра, Хӗрлӗ Ҫарӑн Тӗп Ҫуртӗнче, вырӑссен ҫар кӗнекисен выставкине уҫнӑ. Выставкӑра 300 ҫул хушшинче пичетлесе кӑларнӑ ҫар кӗнекисене кӑтартнӑ. Унта вырӑссен 1647 ҫулта кӑларнӑ пирвайхи ҫар уставӗнчен «Учение и хитрость ратного строения пехотных людей» текенскертен пуҫласа, Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫинчен калакан кӗнекесене ҫитиччен пур. (ТАСС)

«НЕВЕСТА» ЯТЛӐ ҪӖНЕ КИНОФИЛЬМ

Эреванӑри киностудире «Невеста» ятлӑ ҫӗнӗ кинофильм ӳкернӗ. Фильмра совет ҫыннисем нимӗҫ захватчикӗсем оккупациленӗ хулара паттӑррӑн кӗрешнине кӑтартнӑ. Сценари авторӗ Ф. Кнорре, режиссерӗ — РСФСР-ӑн тава тивӗҫлӗ артисчӗ Б. Барнет. Фильмӑн музыкине Армени композиторӗ А Сатян ҫырнӑ. Тӗп рольсене Ирина Радченко тата Борис Андреев артистсем выляҫҫӗ. Укерессине Дон ҫинчи Ростовра тата Эреванӑра ӳкернӗ. (ТАСС)

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Коммунистсен районри пухӑвӗ

ШАХАСАН, январӗн 29-мӗшӗ. (Телефонпа). Енер кунта коммунистсен районри пухӑвӗ пулса иртрӗ.

Парти райкомӗн секретарӗ М. Кузьмин юлташ ВКП(б) райкомӗн отчетлӑ тапхӑрти ӗҫӗсем ҫинчен доклад туса парӗ.

Отчетлӑ доклад тӑрӑх пренире 17 ҫын пухса каларӗҫ. Вӗсем ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене палӑртрӗҫ.

Отчетлӑ тапхӑрта районри парти организацийӗ пурӗ 218 ҫынна парти ретне илнӗ. Вӗсен шутӗнче 77 колхозник, 15 тракторист тата комбайнер. 1944 ҫулта парти ретне 114 ҫынна илнӗ. Районри коммунистсен пухӑвӗ парти ретне ҫӗнӗрен илес ӗҫ ҫаплах та ҫителӗксӗррине палӑртрӗ. Уйрӑм колхозсенчи пуҫламӑш парти организацийӗсем парти ретне илес енӗпе япӑх ӗҫленӗ. Хуранлӑхри «Заря», Сталин ячӗпе тӑракан колхозсенчи, Вӑрман Енӗшри территориальнӑй парторганизацисенче колхоз ӗҫӗнче палӑрнӑ ҫынсене партине илес енӗпе начар ӗҫлеҫҫӗ.

Районра партиллӗ пропаганда ӗҫӗ, иртнӗ вӑхӑтсемпе танлаштарсан, чылаях лайӑхланнӑ. 25 агитколлектив ӗҫлет, вӗсенче 600 ҫын, коммунистсемпе комсомолецсем, агитатор пулса тӑраҫҫӗ. Политикӑллӑ пропагандӑна вӑйлатса лайӑхлатас тӗлӗшпе агитаторсен канашлӑвӗсене час-часах иртнӗ, семинарсем тата консультацисем те нумай пулнӑ. Агитколлектив руководителӗсемпе пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсен канашлӑвне 25 хут ирттернӗ.

Агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх туса пынипе пула, ялхуҫалӑх ҫулне район ӑнӑҫлӑ вӗҫленӗ. 1943—1944 ҫулсенче районри колхозсем государство умӗнчи обязательствӑсене, малтанхи ҫулсемпе танлаштарсан, хастарлӑнрах та хӑвӑртрах пурнӑҫларӗҫ. 1943 ҫулта колхозниксемпе колхозницӑсем государствӑна 156.000 пӑт тырӑ коопераци урлӑ сутнӑ. 1944 ҫулта Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 30.000 пӑт тырӑ панӑ.

Ҫитӗнӳсемпе пӗрлех партин районри пухӑвӗ ӗҫри ҫитменлӗхсене те уҫҫа палӑртрӗ. Иртнӗ ялхуҫалӑх ҫулне чылай колхозсем кая юлса вӗҫленӗ. Шӑхасанти «Красный Октябрь» колхозӑн мала тухма условисем ҫителӗклӗ. Кунта партин пуҫламӗш организацийӗ те, комсомол организацийӗ те пысӑк. Анчах та колхоз ялхуҫалӑх ӗҫӗсемпе кая юлса пырать.

Пуху ҫуракине хатӗрленес ӗҫре те ҫитменлӗхсем пуррине палӑртрӗ. Уйрӑмӑнах удобренисем хатӗрлес, вӑрлӑхсем сортлас ӗҫсем ҫителӗксӗр пыраҫҫӗ.

Пуху ВКП(б) райкомӗн пленумне 19 ҫынран, бюроне 7 ҫынран суйларӗ. ВКП(б) райкомӗн 1-мӗш секретарӗ пулма Кузьмин, иккӗмӗш секретарӗ пулма—Архипов тата кадрсем енӗпе ӗҫлекен секретарь пулма Петров юлташсене суйларӗ.

С. ШАДИН.
В. ВЕСЕЛОВ.

Парти шкулӗсен ӗҫне лайӑх организацилер

ВКП(б) Обкомӗн XX-мӗш пленумӗ, партипе совет кадрӗсен тата интеллигенцин идейӑпа политикӑллӑ пӗлӗвне ҫӗклес шутпа, республикӑри хуласемпе районсенче партипе совет, комсомолпа профсоюз работникӗсем тата партипе комсомолӑн пуҫламӑш организацийӗсен секретарӗсем валли каҫхине вӗренмелли парти шкулӗсем организацилеме йышӑнчӗ. Ҫак решение пурнӑҫа кӗртсе пырса, нумай районсемпе хуласенче парти шкулӗсем организациленӗ ӗнтӗ. Хальхи вӑхӑтра республикӑра парти шкулӗсем 35 ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ. вӗсенче 1271 ҫын вӗренет. Вӗсем хушшинче партипе совет тата комсомол работникӗсемпе хуҫалӑх руководителӗсемсӗр пуҫне, пуҫламӑш парторганизацисен секретарӗсемпе вӗсен заместителӗсем тата комсомолӑн пуҫламӑш организаци секретарӗсем те пур.

ВКП(б) райкомӗсемпе хула комитечӗсем парти шкулӗсене организацилес ӗҫе парти организацисен ответлӑ та кирлӗ ӗҫӗ вырӑнне хурса хакланӑ ҫӗрте парти шкулӗсем кадрсен идейӑпа политика пӗлӗвне ҫӗклес ӗҫе лайӑхлатма пулӑшрӗҫ. Сӑмахран, Чкаловски, Ҫӗрпӳ, Шупашкар, Октябрьски, Элчӗк райкомӗсем тата вӗсен пропагандӑпа агитаци отделӗсем парти шкулӗсене куллен ертсе пыраҫҫӗ. Шкулсенче, вӗсем ӗҫлеме тытӑнсанах, ҫирӗп йӗрке туса хунӑ. Асӑннӑ районсенчи шкулсенче вӗренӳ ӗҫне те начар мар йӗркеленӗ. Лекцисене лайӑх ирттернипе пӗрлех, консультацисене тата классенче вӗренессине лайӑх йӗркелеҫҫӗ. Вӗренекенсем занятисем пулас умӗн килте хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсем валли парти кабинечӗ литературӑпа ытти кирлӗ материалсене тупса парать. Ҫавна пула занятисем активлӑн иртеҫҫӗ.

Анчах та парти шкулӗсене организацилес ӗҫ ҫине пур ҫӗрте те тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ-ха. Хӗрлӗ Чутай, Комсомольски, Ҫӗмӗрле тата ытти хӑшпӗр районсенче парти шкулӗсем организацилес ӗҫе иккӗмӗш вырӑнта тӑракан работниксем ҫине хунӑ. Ҫавна пула вара вӗренекенсене суйласа илесси тата вӗренме яваҫтарасси темиҫе эрнене тӑсӑлнӑ. Асӑннӑ районсенчи шкулсенче ку тарана ҫитсе те вӗренӳ ӗҫне кирлӗ пек йӗркелемен-ха. Сӑмахран, Хӗрлӗ Чутай районӗнчи парти шкулӗнче пурӗ 33 ҫын вӗренмелле. Анчах занятисенче 19—20 ҫын пулмаҫҫӗ. Занятисем те начар иртеҫҫӗ. Апла пулин те, ВКП(б) Хӗрлӗ Чутай райкомӗн руководителӗсем ҫавӑн пек йӗркесӗрлӗхсемпе килӗшсе тӑраҫҫӗ. Хӑшпӗр чухне тата вӗсем хӑйсем те занятисене ирттерме чӑрмантараҫҫӗ.

Комсомольски районри парти шкулӗнче те ҫавӑн евӗрлех пулса пырать. Унта занятисене шкула ҫӳрекенсенчен виҫҫӗмӗш пайӗ кӑна йӗркеллӗ ҫӳреҫҫӗ. Ыттисем вара хут ҫинче ҫеҫ шутланса тӑраҫҫӗ. Ҫӗмӗрле районӗнчи парти шкулӗнче занятисене ҫӳреме тивӗҫлисенчен ҫурри кӑна ҫӳреҫҫӗ.

Хӑшпӗр ҫӗрте парти шкулӗсенче вӗренме ҫынсем яваҫтарнӑ чухне те йӑнӑшсем тунӑ. Шкулта вӗренме ытларах яваҫтарассишӗн тӑрӑшса, марксизм-ленинизм теорине вӗренес тӗлӗшпе хӑй тӗллӗн ӗҫлеме пултаракан работниксене те шкулсене илнӗ.

Марксизмпа ленинизм теорине шкулсемпе курссенче кӑна вӗренме пулать тени—йӑнӑш шухӑш. Пирӗн кадрсене теори тӗлӗшӗнчен вӗрентсе хатӗрлес ӗҫри тӗп меслет вӑл—харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренесси пулать. Каҫхине вӗренмелли парти шкулӗсем организацилени ҫав меслете нихӑш енчен те хирӗҫлемест. Пачах урӑхла, парти шкулӗсенче пӗтӗм вӗренӳ ӗҫне шкула ҫӳрекенсене кӗнекепе ӗҫлеме вӗрентес, кашни кӗнекерен чи кирлине суйласа илме, вуланине асра тытма вӗрентес тесе организацилесе пымалла. Ҫак енчен илсен, каҫхине вӗренмелли парти шкулӗсен ӗҫӗнче те ҫитменлӗхсем сахал мар-ха. Шкулсене ҫӳрекенсем усӑ курма хушнӑ кӗнекесене вуламаҫҫӗ, занятие лекцисем итлеме кӑна ҫӳреҫҫӗ.

Парти шкулӗсен ӗҫне лайӑх организацилеме пирӗн кирлӗ майсем ҫителӗклӗ тарапах пур. ВКП(б) райкомӗсемпе хула комитечӗсен тата вӗсен пропагандӑпа агитаци отделӗсен халӗ уйрӑмӑнах вӗренӳ ӗҫне лайӑхлатасси ҫине тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла. Занятисенче лекцисемпе докладсем ирттерессине малти вырӑна хурса, кӗнекепе харпӑрхӑй тӗллӗн ӗҫлессине хакламасӑр тӑнине тӗпренех пӗтермелле. Лекцисемпе докладсене пӗтӗмӗшпех вӗренекенсене пулӑшас май ирттермелле. Анчах та ҫакӑ вӑл лекцисемпе докладсен пахалӑхне чакарассине пӗлтермест. Лекцисемпе докладсене кирек хӑҫан та политика тӗлӗшӗнчен ҫивчӗ тата ӑнланмалла тумалла. Лекцисене иртнӗ чухне карттӑсемпе, таблицӑсемпе, диаграммӑсемпе тата художествӑллӑ литературӑпа ытларах усӑ курас пулать.

Лекци пуҫланас умӗн преподавателӗн лекци мӗнле темӑпа иртесси ҫинчен кӑна мар, тата вӑл малтан вӗреннӗ темӑпа мӗнле ҫыхӑнса тӑни ҫинчен каламалла. Лекци вӗҫленнӗ хыҫӑн малтан калансем тӑрӑх выводсем туса памалла тата ыйтусем ҫине ответлемелле. Пӗр ыйтӑва та ответлемесӗр хӑварма юрамасть. Лектор мӗнле те пулин ыйтӑва ҫийӗнчех татӑклӑн ответлеме пултараймасть пулсан, вӑл ыйту ҫине тепӗр лекцире е консультацире ответлемелле.

Преподавателе лекци ирттерме лекци текстне пӗтӗмпех ҫырса пӗтернӗ пулсан е тата унӑн тӗплӗн шутласа тунӑ план пулсан кӑна ирӗк памалла.

Классенче иртекен занятисем тата каҫсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсем вӗренекенсем вуланине тата лекцисенче итленине асра тытса хӑварма, вӗренекенсем материалсене мӗнле ӑнланнине тӗрӗслеме пулӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та райкомсемпе хула комитечӗсен классенчи занятисене каласусене лайӑх организацилесе ирттермелле тӑвас пулать. Классенчи занятисенче вӗренӳре кирлӗ 4—5 тӗп ыйтӑва лартсан аван пулать. Классенчи занятисене ирттерессине ҫакӑн пек йӗркелемелле: занятие пуҫланас умӗн преподаватель сӑмах илет. Вӑл 5—7 минут хушшинче вӗренекенсем умне ыйтусем лартать, занятин тӗп тӗллевне кӑтартса парать. Лартнӑ ыйтусене пӗр-пӗрипе калаҫса сӳтсе-явсан аван пулать.

Хальхи вӑхӑтра парти кабинечӗсенчен чылайӑшӗсем парти шкулӗсенче вӗренекенсем валли консультацисем ирттермеҫҫӗ тата парти шкулӗсенчи преподавательсене те ҫителӗксӗр пулӑшаҫҫӗ. Парти кабинечӗсенчи работниксен ҫав ҫитменлӗхе халех пӗтермелле. Вӗсен парти шкулӗсенче вӗренекенсемпе вӗренекенсем валли литературӑпа пособисем ҫителӗклӗ тупса пама тӑрӑшмалла, консультацисем организацилемелле.

Парти шкулӗсенче, тӗпрен илсен, «ВКП(б) историн кӗске курсне» тата Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ятлӑ кӗнекине вӗренеҫҫӗ. Преподавательсен тивӗҫӗ — вӗренекенсене Ленинпа Сталин партийӗн мирлӗ строительство ҫулӗсенчи, ҫавӑн пекех тата Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенчи кӗрешӗвӗпе ҫӗнтерӗвӗсене тӗплӗн ӑнлантарса парасси пулать.

ВКП(б) райкомӗсен, комсомол райкомӗсен, райсовет исполкомӗсен работникӗсем, партипе комсомолӑн пуҫламӑш организаци секретарӗсем большевикла партипе совет правительствин директивисене тӳрремӗн пурнӑҫа кӗртсе пыракансем пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсем масса хушшинче политикӑллӑ ӗҫ туса пыраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӑл работниксен идейӑпа политика пӗлӗвӗнчен партипе государствӑн пӗтӗм ӗҫне пурнӑҫа кӗртесси нумай килет. Апла пулсан, ҫав работниксен теорипе политика пӗлӗвне ӳстересси парти организацийӗсен пирвайхи задачи пулса тӑрать. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ парти шкулӗсен ӗҫне лайӑхлатас ыйту парти организацийӗсен кулленхи ӗҫӗнче тӗп вырӑнта пулмалла.

И. ВАСИЛЬЕВ,
ВКП(б) Обкомӗн агитаципе пропаганда отделӗн инструкторӗ.

„Вӑрҫӑ искусствинче питӗ пысӑк мастерлӑх кӑтартса пани"

АНГЛИ ХАҪАЧӖСЕМ ХӖРЛӖ ҪАРАН НАСТУПЛЕНИЙӖ ҪИНЧЕН

ЛОНДОН, январӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӳллӗ наступлени туса пыни пур хаҫатсем ҫинче те тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать.

«Таймс» хаҫат хӑйӗн редакцийӗ ҫырнӑ статьяра, «Хӗвелтухӑҫӗнчи ҫӗнтерӳсем» ятласкерте, ҫапла калать: «Ҫав тери хӑватлӑ ҫар темиҫе ҫӗр миля сарлакӑш фронтра шӑннӑ ҫӗрпе куҫса пыни ку таранччен пулса иртнӗ ҫапӑҫусенчен пуринчен те ирӑлса тӑрать. Вӑл вӑрҫӑ искусствинче питӗ пысӑк мастерлӑх кӑтартса пани пулать».

«Дейли мейл» хаҫат хӑйӗн редакцийӗ ҫырнӑ статьяра ҫапла калать: ҫав тери тӗлӗнмелле наступленире совет ҫарӗсем ӑҫта ҫитме пултарӗҫ-ши? тесе ыйтаҫҫӗ пурте. Вӑрҫӑ историйӗнче совет ҫарӗсен хальхи наступленийӗ ҫитекенни нимӗн те пулман. Нимӗҫсем хӑйсен ӗҫӗсем ҫав тери ӑнса пынӑ вӑхӑтра та кун пек наступлени тума хӑтланса та пӑхайман.

Пур хаҫатсем те хӗвеланӑҫ фронтӗнчи Англи ҫарӗсен штабӗ ҫумӗнчи корреспондентсен пӗлтерӗвӗсене пичетлеҫҫӗ. Вӑл пӗлтерӳсенче Германи ҫарӗсене хӗвеланӑҫӗнчен хӗвелтухӑҫнелле йышлӑн куҫарни ҫинчен калаҫҫӗ.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаҫат ҫапла ҫырать: нимӗҫсем хӗвеланӑҫ фронтӗнчи малти позицисенчен ҫарпа ҫар хатӗрӗсене Германи варринелле йышлӑн илсе каяҫҫӗ. Ҫарсем хӗвелтухӑҫнелле питӗ хӑвӑрт куҫнине шута илсен тата ҫӗрле кӑна куҫас шухӑша пӑрахнине шута илсен, ҫарсене васкасах вырӑссене хирӗҫ вӑрҫма илсе кайнине тавҫӑрса илме пулать. Корреспондент ҫапла хушса хурать: союзниксен летчикӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, хӗвеланӑҫнелле пушӑ поездсем каяҫҫӗ пулсан, хӗвелтухӑҫнелле каякан поездсем вара ҫарпа тата ҫар хатӗрӗсемпе тулнӑ. «Ҫар хатӗрӗсем,—ҫырать «Дейли геральд» хаҫатӑн корреспонденчӗ,—тата ҫарсем Германи урлӑ хӗвеланӑҫӗнчен хӗвелтухӑҫнелле йышлӑн куҫса пыраҫҫӗ. Кун пек йышлӑн куҫмасӑр нумай пулатчӗ-ха. Ҫарсене тӳрех Арден савӑлӗнчен куҫараҫҫӗ тесе шутлама пулать. Мӗн чухлӗ поездпа усӑ курнине шута илсен, пӗр-икӗ дивизи кӑна мар, пысӑк вӑйсем куҫарнине тавҫӑрса илме пулать».

Германи ҫарӗсене хӗвеланӑҫӗнчен хӗвелтухӑҫнелле куҫарни ҫинчен калакан пӗлтерӳсем пирки «Дейли мейл» хаҫат ҫапла ҫырать: «Голландире тата Бельгире тепӗр хут вӑйлӑн пырса ҫапмалли вӑхӑт килсе ҫитрӗ», тет.

«Стар» хаҫат хӑйӗн редакцийӗ ҫырнӑ статьяра ҫапла калать: «Мускавран килекен хыпарсем пире паян питӗ савӑнтараҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӑл хыпарсем тата пысӑкрах ӗҫсем тума май пурри ҫинчен калаҫҫӗ». Хаҫат ҫакна палӑртать: Хӗвелтухӑҫ Пруссири ҫапӑҫусенче «вырӑссем нимӗҫсен мӑнкӑмӑллӑхне ҫапса хуҫрӗҫ», Германин ҫакӑрлӑ вырӑнне татса илчӗҫ, Германишӗн ҫав тери паха пулса тӑракан ҫӗркӑмрӑкӗпе промышленность районне—Тури Силезие хупӑрласа илнӗ.

Германири лару-тӑру

Берлинран министерствӑсене эвакуацилеҫҫӗ.—Германи столицинче апат-ҫимӗҫ ҫитменни вӑйлӑн палӑрать.—Пур ҫулсем ҫинче те беженецсем туллиех

СТОКГОЛЬМ, январӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Швецире тухакан «Афтонтиднинген» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, нимӗҫсен пропаганда министерстви, финанс министерстви, хуҫалӑх министерстви тата снабжени министерстви Берлинран Траунштейн, Розенхейм, Райнхенхаль тата Берхтесгаден хулисене куҫса кайнӑ. Шалти ӗҫсен министерстви Шварцвальд облаҫӗнчи Баденвейлер хулине куҫса кайнӑ, мӗншӗн тесен Гиммлер Гитлера ытла ҫывӑх вырӑнта пуласшӑн мар. «Экспрессен» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Бранденбургӑн хӗвелтухӑҫ пайӗнчи халӑха урӑх ҫӗре куҫарма пуҫланӑ. Силезин халӑхне ҫаплах ытти ҫӗре куҫараҫҫӗ.

«Стокгольмс Тиднинген» хаҫатӑн Берлинри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, «нимӗҫ казармисем халӗ пурте пушанса юлнӑ, мӗншӗн тесен резервсене пурне те хӗвелтухӑҫ фронтне илсе кайнӑ».

Швеци хаҫачӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Берлинра апат-ҫимӗҫ ҫитменни питӗ палӑрать. Пур ҫулсем ҫинче те беженецсем туллиех.

НИМӖҪСЕМ ХАЙСЕН ҪАРӖСЕНЕ ИТАЛИРЕН ВЕНГРИЕ КУҪАРАҪҪӖ

ЛОНДОН, январӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). АФИ агентстви Итали чиккинчен пӗлтернӗ тӑрӑх, нимӗҫсен Ҫурҫӗр Италире тӑракан 5—6 дивизине нимӗҫсен Фрисрен генералӗ аллине панӑ. Ҫав генерал Будапешт патне татса кӗме тӑрӑшать.

Хӗвеланӑҫ Европӑри вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, январӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: Голландире союзниксен ҫарӗсем Лимме хулинчен 2,5 миля кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехри Санкт-Одилиенберга ҫитнӗ. Кӑнтӑр Голландин ытти вырӑнӗсенче тата Германи территорийӗнче Гейнсберг ҫывӑхӗнче патрульсем ҫапӑҫнӑ. Союзниксен патрулӗсем темиҫе тӗлте Рур шывӗ хӗррине тухнӑ.

Сен-Вит районӗнче союзниксен ҫарӗсем 1.000 ярд малалла кайнӑ. Сен-Витпа Клерво хушшинчи сурма ҫулта союзниксем Ленгелертан хӗвелтухӑҫнерехре пӗр миля малалла кайнӑ та Лилер патне ҫитнӗ. Клерво союзниксен аллинче. Союзниксен чаҫӗсем Вейлер тавралӑхне пырса ҫитнӗ. Геттингенран ҫурҫӗртерехре малалла кайнӑ.

Ҫурҫӗр Эльзасра тӑшман тунӑ атакӑсене сире-сире янӑ хыҫҫӑн Модер шывӗ ҫинче патрульсем кӑна ҫапӑҫнӑ. Кольмартан ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре союзниксен ҫарӗсем Кольмар каналӗнчен ҫурҫӗртерехре пӗр миля ытларах малалла кайнӑ. Кольмар секторӗн кӑнтӑр пайӗнче хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн союзниксем Серне хулипе юнашар ларакан ялсене ҫитнӗ.

Ҫанталӑк япӑх пулни союзниксен авиацийӗн ӗҫне чӑрмантарнӑ.

ЛОНДОН, январӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс тавралӑхӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре каланӑ тӑрӑх, Италири фронтсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

ЛОНДОН, январӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: союзниксен ҫарӗсем Сен-Витран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре (Бельги) атака пуҫласа янӑ та, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, Гецшейда тата Геппенбаха тытса илнӗ. Сен-Витран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре союзниксем тӑшмантан Груфланжа тасатнӑ. Унтан кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре союзниксен чаҫӗсем Брахт хули тавралӑхне пырса тухнӑ (Рейн облаҫӗ).

Рейн облаҫӗнчи Вейсвампахран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре союзниксем малалла куҫнӑ, халь Ур шывӗнчен пӗр мильӑра тӑраҫҫӗ. Союзниксен патрулӗсем Клерво хулинчен 5 миля ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре Кӑленборна ҫитнӗ. Клерворан ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Мюнхаузен хули, ҫавӑн пекех тата Люксембургри Вальгаузенпа Вейлер хулисем союзниксен аллинче.

Саарбрюккен районӗнче, Анатри Вогезра тата Ҫурҫӗр Эльзасра, тарӑн юр ҫунӑ пирки, паллӑ ҫапӑҫусем пулман.

Союзниксен авиацийӗ ҫӗр ҫинчи ҫарсене пулӑшса пынӑ.

Йывӑр бомбардировщиксен пит пысӑк соединенийӗсем Дортмунд хули ҫывӑхӗнчи икӗ бензол заводне, Дуисбургпа Кельн хулисенче Рейн шывӗ урлӑ хывнӑ кӗперсене тата тӑшманӑн ытти объекчӗсене тапӑннӑ.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, январӗн 29-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи бомбардировщикӗсем Штутгарт тата Берлин районӗсенчи чугун ҫулсене пырса тапӑннӑ.

ЛОНДОН, январӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс тавралӑхӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре каланӑ тӑрӑх, Италире 5-мӗшпе 8-мӗш армисен участокӗсенче патрульсем активлӑн ҫапӑҫнӑ.

ШУБАШИЧ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ЙЫШАННА РЕШЕНИ

ЛОНДОН, январӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: ӗнер икӗ сехет хушши калаҫнӑ вӑхӑтра Петр король Югослави премьер-министрне Шубашича, хӑйӗн малтанхи сӑмахӗнчен пӑртак чакса, ҫӗнӗ сӗнӳ панӑ. Ҫапах та король январӗн 22-мӗшӗнче премьер-министра ӗҫрен тухма хушнине йышӑнса присяга пама хушнӑ. Каярахпа кабинет ҫӗнӗрен лару тунӑ та ӗҫрен тухмалла марри ҫинчен йышӑннине тепӗр хут ҫирӗплетнӗ.

ТИТОПА ШУБАШИЧ ТУНА КИЛӖШӰВӖН ТЕКСТНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КӐЛАРНИ

БЕЛГРАД, январӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Паян хаҫатсенче Титопа Шубашич 1944 ҫулхи ноябрӗн 2-мӗшӗнче тунӑ килӗшӗве пӗтӗмӗшпех пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл килӗшӗве Югославин II-мӗш Петр королӗ 1945 ҫулхи январӗн 12-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре йышӑнман. Килӗшӳре ҫапла каланӑ:

Пӗрлешӳллӗ нацисем Югославие унӑн ӗлӗкхи формипех йышӑннӑ тата вӑл халӗ те ҫавӑн пекех юлать, ҫавӑнпа та эпир хамӑр ҫӗршыв ытти ҫӗршывсемпе ҫыхӑнса тӑрас ӗҫре малашне те Югослави ячӗпе калаҫатпӑр, халӑх хӑйӗн государство тытӑмӗн формине хӑй ирӗкӗпе туса хуриччен ҫапла пулса пырӗ.

Вӑл вӑхӑтчен ҫӗршывра хирӗҫӳсем ан тухса кайччӑр тесе, эпир ҫапла килӗшетпӗр: II-мӗш Петр король, халӑх ун пирки хӑйӗн сӑмахне каласа париччен ҫӗршыва каялла таврӑнмалла мар. Король ҫук чухне унӑн ӗҫне регент совечӗ туса пымалла.

Югослави халӑхӗн ирӗклӗх Комитечӗн председателӗ Иосип Броз-Тито маршалпа Югослави правительствин председателӗ Иван Шубашич доктор, Югославин Ирӗклӗх Вечин президиумӗпе пӗр пулса, 28 ҫынтан Югослави правительствине туса хума килӗшнӗ.

Влаҫӑн ҫакӑн пек йӗрки Югославире учредительнӑй пуху йышӑниччен, тепӗр тӗслӗ каласан—государство конституцине туса хуриччен пымалла. Ҫӗнӗ правительство деклараци пичетлесе кӑларать, унта демократиллӗ ирӗклӗхӗн тӗп принципӗсем ҫинчен каласа памалла.

ВЕНГРИРИ КОММУНИСТСЕН ТАТА СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТСЕН ПАРТИЙӖСЕМ ТУНА КИЛӖШӰ

ДЕБРЕЦЕН, январӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Дебреценра тухакан хаҫатсенче Венгрири коммунистсен тата социал-демократсен партийӗсен тӗп органӗсем пӗр-пӗрипе тунӑ килӗшӗве пичетлесе кӑларнӑ. Килӗшӳре ҫапла каланӑ:

«Венгрири коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ тата социал-демократсен партийӗн Центральнӑй Управленийӗ реакцие хирӗҫ кӗрешес тата демократиллӗ улшӑнусем тӑвас тӗлӗшпе пӗрле ӗҫлеме килӗшеҫҫӗ. Ҫак икӗ парти 6 ҫынтан яланхи консультаци комиссийӗ туса хураҫҫӗ, унта кашни парти 3-шер ҫын ярать. Комиссин тӗп задачи—экономикӑпа политикӑн питӗ пысӑк ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене икӗ парти пӗрле пурнӑҫлама пултарччӑр тесе, ҫав ыйтусем тӑрӑх вӗсен шухӑшӗсене пӗр-пӗрипе килӗштересси пулать.

Икӗ парти те хӑйсен программисене тата организаци тӗлӗшӗнчен уйрӑм пурӑнса ӗҫлессине ҫаплипех хӑвараҫҫӗ тата пӗрне-пӗри хисеплеме пулаҫҫӗ. Икӗ парти пӗрлешсе ӗҫлени Венгри халӑхӗн никама пӑхӑнманлӑх фронтне ҫирӗплетӗ».

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Кинофикаци управленийӗ сассӑр кино механикӗсен пӗр уйӑхлӑх курсне вӗренме илет. Вӗренме кӗрес текенсен ҫак адреспа пымалла: гор. Чебоксары, Кинотеатр, директору курсов. 3—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ г. Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместительпе секретарӗн — 4—20, парти пурнӑҫ пайӗн 3—97, промышленность пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 0017 Типографи № 1, Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59×42 и. д. Тираж 16.000 экз.